Шупашкар 2014

# Паян «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум уçăлать

чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

202/26608/ № Кĕçнерни кун, 2014, юпа (октябрь), 9 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

# Аталан, çирĕплен, Чăваш Ен!

## Пиллĕкмĕш форум "5" паллăлăх irrтĕр



сар.ru сайт архивĕнчи сăн ўкерчĕк

***Юлашки çулсенче Чăваш Ен чăннипех те спорт регионĕ пулса тăчĕ. Ахальтен-им Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин Пĕтĕм тĕнчери 5-мĕш форума пирĕн республикăра ирттерме шаннă. Аса илтеретпĕр: спорт отрасльне аталанма пулăшакан чи пысăк та сумлă мероприяти малтанхи çулсенче Хусан, Мускав, Саранск тата Якутск хулисенче иртнĕ.***

Чăваш Ен физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе чылай ĕç пурнăçланнине палăртмалла. Кун çинчен пирĕн республикăна килекен хăнасем те пĕрре мар калаçнă. Кашни районпа хула спорт керменĕсемпе мăнаçланма пултарать. Хальхи вăхăтра тăваканнисем те чыс-сум кўреççĕ, вĕсем спорт шайне тата та çўлерех çĕклеме пулăшĕç. Çĕр-шыври тĕрлĕ ăмăрту-турнир йĕркелес енĕпе те Шупашкар чи малтисен ретĕнче. Пĕтĕм Раççейри çуллахи ял спорт вăййисене пирĕн республика икĕ хут /2004, 2012/ йышăннă, вĕсенче 60 регионтан килнĕ 2500 ытла спортсмен тупăшнă. Спорт вăййисен пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ команди чылай турнирта мала тухса çĕнтерўçĕ ятне тивĕçнĕ. Çĕр-çĕр спортсмен йышĕнче пирĕн ентешсем те сатур пулни çунатлантарать.

2003 çул хĕвĕрт утакансен Европа кубокĕпе палăрса юлчĕ. Тепĕр пилĕк çултан Тĕнче кубокĕ пире уяв парнелерĕ. Çак ăмăртусен вăхăтĕнче Шупашкара тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнчен вун-вун хăна килсе курчĕ, ун чухне эпир чăваш спортсменĕсен çитĕнĕвĕсемпе те савăнтăмăр. Елена Николаева, Владимир Андреев, Татьяна Сибилева, Вера Соколова, Ирина Юманова тата ыттисем команда пухмачне медальсемпе пуянлатрĕç. Массăллă ăмăртусем йĕркелесси те пирĕншĕн йăлана кĕчĕç. Акă 2004 çулта "Нацисен кросĕ" ăмăрту старт илчĕ, тепĕр çул Чăваш Ен Пĕтĕм Раççейри "Йĕлтĕр йĕрĕ" ăмăртăва хутшăнма пуçларĕ. Пĕтĕм тĕнчери студентсен ăмăртăвĕнчен те айккинче юлмарăмăр. Пирĕн хĕрсем Алина Прокопьева, Ирина Юманова, Антонина Савельева, Вера Соколова, Екатерина Краснова унтан медальсемпе таврăнчĕç. Универсиада çулăмĕ те республика çыннисенче çĕнĕ ĕмĕтшухăш çуратрĕ.

Чылай çул каялла парашют спортĕнче чапа тухнă пирĕн ентеш Майя Костина чăваш халăхĕн ятне тўпене çити çĕкленĕ. Унăн çитĕнĕвĕсене хисеплесе-ши пĕлтĕр Шупашкарти аэроклубра пĕрремĕш хут парашютпа сикес енĕпе Европа чемпионачĕ тата тĕнче кубокĕ иртрĕ. Ăмăртура 19 çĕр-шывран 150 спортсмен вăй виçрĕ. Кăçалхи çул вара ветерансенчен тĕслĕх илме сĕнчĕ: "Спартак" стадион Раççей пенсионерĕсен пĕрремĕш спартакиадине йышăнчĕ. Сочире иртнĕ Олимп вăййисем те пирĕн çĕр-шывра пурăнакансен асĕнче юлĕ. Чăваш Ен те çак пулăмăн пĕр пайĕ пулса тăчĕ. Олимп çулăмĕн эстафети республикăри кашни çынна хавхалантарчĕ, спортсменсем пек çĕнĕ çитĕнўсем тума, çĕнтерў патне талпăнма вăй-хал хушрĕ.

Чăваш Республикин спортри çĕтĕнĕвĕсемпе ĕçĕсене Мускавра та лайăх пĕлеççĕ. 2012 çулхи кăтартусем тăрăх пирĕн республика Пĕтĕм Раççейри смотр-конкурсра иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ, "Раççей регионĕ" номинацире наци премине тивĕçрĕ, 2013 çулта та парнесĕр юлмарăмăр.

Андрей МИХАЙЛОВ

ЦИТАТА

**Паян çамрăк çынсен ытларах пайĕ япăх йăласенчен пăрăнса сывă пурнăç йĕркине суйласа илет. Çак утăма тума вĕсене спорт керменĕсен тытăмне аталантарас енĕпе пурнăçланакан ĕçсем пулăшаççĕ. Юлашки çулсенче Чăваш Ен спорт инфратытăмне тĕрлĕ çăл куçран 5 млрд ытла укçа-тенкĕ хывнă, 50 ытла объект тунă тата юсаса çĕнетнĕ. Пирĕн республикăра пурăнакан кашни виççĕмĕш çын спортпа туслă. Халăх йышлăн хутшăнакан спорт акцийĕсем вăй илсе пыраççĕ, вĕсем çынсене пысăк хастарлăх тата лайăх кăмăл-туйăм кўреççĕ. Сăмахран, Шупашкар хулин кунĕнче иртернĕ "Çăлтăрпа пĕрле – зарядкăна" акцие 28 пин çын хутшăннă, ăна Европа рекорчĕсен кĕнекине кĕртнĕ.**

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев
ЧР Патшалăх Канашне янă Çыруран.

ЫРĂ ПУÇАРУ

# Олимпиецсем çинчен – открытка пуххи

***Çак кунсенче Шупашкарти "СВ-Пресс" издательство ушкăнĕ "Чăваш Енĕн Олимп мухтавĕ" открыткăсен пуххине пичетлесе кăларнă. Çакă "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" Пĕтĕм тĕнчери форума хутшăнакансемшĕн, спорта юратакансемшĕн тата сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансемшĕн чăн-чăн парне пулчĕ. Асăннă проектăн авторĕ тата ăна пухса хатĕрлекенĕ – республикăри паллă журналист, "СВ-Пресс" издательство ушкăнĕн директорĕ – тĕп редакторĕ Александр Вражкин.***



**– Александр Николаевич, калăр-ха, халĕччен Олимп чемпионĕсемпе призерĕсене, спорт "çăлтăрĕсене" тейĕпĕр, çапла пĕр "тĕвве" пухса кăларни пулнă-и?**

– Чăн та, халĕччен открытка пуххи пичетленмен. Спорт энциклопедийĕ тухнăччĕ-ха, анчах шел те, унта йăнăшсем кайкаланă. Ку проект – паян кăна шухăшланă япала мар, унпа малараххах ĕçлеме тытăннăччĕ. Вăл шăпах Спорт форумĕ умĕн 5000 экземплярпа кун çути курни вырăнлă та, пĕлтерĕшлĕ те пулчĕ. Вĕсенчен 3000-не ЧР Физкультурăпа спорт министерстви туянчĕ. Ыттине сутлăха кăларатпăр. Сăмах май, ăна Союзсен çуртĕнче те туянма май пулĕ. Тĕплĕнрех 63-03-28, 89023282705 телефонсемпе ыйтса пĕлме пулать. "Çул кăтартмăш: Шупашкар" гидкарттăна та 5000 экземплярпа хатĕрлерĕмĕр. Вĕсене тĕп хулари хăна çурчĕсем туянчĕç. Брошюрăсене форума хутшăнакан хăнасене пакетсемпе пĕрле парĕç.

Асăннă открытка пуххине чăвашсен пĕрремĕш олимпиецĕнчен Ардалион Игнатьевран пуçласа Паралимп тата Сурдлимп вăййисен чемпионĕсемпе призерĕсене те кĕртнĕ. Çавăн пекех Çамрăксен Олимп вăййисен чемпионĕсемпе призерĕсем те вырăн тупнă унта. Комплектра – тĕнчен спорт историне ылтăн сас паллисемпе çыраннă Ардалион Игнатьевпа Елена Иванова, Елена Николаевăпа Олимпиада Иванова, Владимир Андреев, Светлана Чиркова, Валерьян Соколов, Валерий Ярдыпа Ирина Калентьева, Владимир Воронков, Александра Кедярова, Дмитрий Древин, Лилия Ефремова. Çавăн пекех республика тулашĕнче çуралса ўснĕ, Олимп вăййисен хисеп пьедесталĕ çине тăма тивĕçнĕ чăвашсене те открыткăсен пуххине кĕртрĕмĕр. Вĕсем – Николай Колесников, Виталий Константинов, Анастасия Колесникова, Сергей Корнилаев, Сергей Казаков.

**– Открытка пуххин паха енĕ мĕнре-ши?**

– Пĕрремĕшĕнчен, вăл паха хутпа пичетленнĕ. Тыткалама меллĕ, илĕртўллĕ, чуншăн та хĕпĕртев. Иккĕмĕшĕнчен, паян пурте хулăн кĕнекене ăша хывасшăн мар. Ку вара спортпа кăсăкланакансемшĕн – кĕске те усăмлă информаци çăл куçĕ. Уйрăмах тăван ен культурине вĕренекен шкул ачисемшĕн питĕ меллĕ. Преподавательсемпе студентсене те кирлĕ вăл. Библиотекăсемшĕн те паха.

**– Ĕçĕр хăвăра тивĕçтерчĕ-и?**

– Пытармастăп: спорт "çăлтăрĕсемпе" ĕçлеме питĕ килĕшрĕ. Мĕншĕн тесен хам та шкул çулĕсенченех спортпа туслă. Олимпиецсемпе тата призерсемпе пуринпе те калаçнă эпĕ. Тĕрĕссипе, вĕсемпе калаçниех яланлăхах асра юлать. Открытка пуххинче пичетленннĕ хăш-пĕр ўкерчĕк халĕччен ниçта та кун çути курман. Сăн ўкерчĕксемсĕр пуçне открыткăсенче чемпионсемпе призерсен биографийĕпе, хăш Олимпиадăна хутшăннипе, медалĕпе паллашма пулать. Хуплашкара – Шупашкарсем 2013 çулта "çăлтăрпа" зарядка тунă, хăвăрт утассипе Тĕнче кубокĕ вăхăтĕнчи сăн ўкерчĕксем тата паянхи спорт "çăлтăрĕсем". Олимпиецсенчен чылайăшĕ хăйсен тăрăхĕсенчи Хисеплĕ гражданинсем. Çакăнпа питĕ мăнаçланаççĕ вĕсем. "Çак ят темле медальтен те хаклăрах", – теççĕ.

**– Малашнехи ĕмĕтĕрсем пирки те пĕлесчĕ.**

– Чăваш Енре Европа, Тĕнче чемпионачĕсене хутшăннă маттур спортсменсем те йышлăн. "Чăваш Енĕн спорт мухтавĕ" открытка пуххи кăларма ĕмĕтленетпĕр. Кун пирки ЧР Физкультурăпа спорт министерствинче те хамăн шухăшăма пĕлтертĕм. Çавăн пек çынсенчен тĕслĕх илмелле çамрăк ăрăвăн. Паллах, пурте олимпиец пулаймĕç. Çапах та манăн шухăшăмпа – физкультурăпа спорт çынна çитĕнў тума пулăшаççех. Спортпа туслин пур енĕпе те ăнать.

Роза ВЛАСОВА.
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ўкерчĕкĕ

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнчи 132-мĕш указĕпе килĕшўллĕн ĕçри çитĕнўсемшĕн тата общество ĕç-хĕлĕнчи хастарлăхшăн Шупашкар хулинчи "Право йĕрки" общество фончĕн председательне, Чăваш Республикин Общество палатин членне **Александр Ильич ДЕЛЬМАНА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă.

КУН хыççăн КУН
☎ 56-04-26, 28-82-91

## 625 волонтер ĕçе хатĕр



***"Раççей – спорт çĕр-шывĕ" Пĕтĕм тĕнчери форум ĕçне волонтерсем хастар хутшăнаççĕ. Вĕсене пурне те аккредитациленĕ, ятарлă тумсемпе тивĕçтернĕ.***

Волонтерсем тĕрлĕ объектра ĕçлĕç. Пĕрисем хăнасене аэропортра кĕтсе илĕç, ăсатса ярĕç. Теприсем Спорт форумне хутшăнакансене шута илĕç, виççĕмĕшĕсем массăллă информаци хатĕрĕсен ĕçченĕсене пулăшĕç, VIP-хăнасене ертсе çўрĕç. Пичет продукцине валеçме, экскурсисем йĕркелеме уйрăм çынсене уйăрнă. Çавăн пекех вĕсем курав мероприятийĕсенче те, ăсталăх сехечĕсенче пулăшу кўрĕç. Аса илтеретпĕр: пысăк çак мероприяти ĕçне хутшăнма 625 çамрăка (Чăваш Енри аслă шкулсемпе техникумсенче вĕренекенсем) суйласа илнĕ. Вĕсене пухса ятарлă канашлу та, вĕренў те ирттернĕ ĕнтĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ ĕнерех ĕçе пикеннĕ.

Р.ИВАНОВА.

## Калемçĕсен те канашламалли, сўтсе явмалли пур



***Дагомысра "Пĕтĕм Раççей – 2014" XVIII фестиваль иртнĕ. Раççей Журналисчĕсен союзĕ çулталăкра ирттерекен тĕп мероприятисенчен пĕри ку.***

Форумра "Журналистика – вăл мисси" конференци иртнĕ. Унăн ĕçне ăсчахсем, политиксем, культура ĕçченĕсем, регионсен ертўçисем, министрсем, журналистсем хутшăннă. Ларура массăллă информаци хатĕрĕсен пĕлтерĕшĕпе вырăнĕ, паянхи обществăра "шанăç формулине" йĕркелесси пирки калаçнă. Çавăн пекех фестиваль программипе килĕшўллĕн тĕл пулусем, "çавра сĕтелсем", лекцисем, район-хула хаçачĕсемшĕн пĕлтерĕшлĕ темăсемпе практика ĕçĕсемпе практикумсем ĕçленĕ. Вĕсене экспертсем – теоретиксемпе практиксем – ертсе пынă. Пухăннисен тĕрлĕ куравпа, кĕнекесен хăтлавĕпе, он-лайн режимри çĕнĕ проектсемпе паллашма май пулнă. Концерт залĕнче кăçалхи чи лайăх илемлĕ фильмсене кăтартнă, вĕсене ўкерекенсемпе тĕл пулусем йĕркеленĕ. Асăннă фестивале Раççей журналисчĕсен членĕ, Чăваш Енри Этноссен хушшинчи журналистика гильдийĕн председателĕ Светлана Кузнецова (Канаш хули) хутшăннă. "Регионсем кунта пысăк, туслă командăпа, пĕрешкел тумпа, хитре стендсемпе, харпăр хăй кăларăмĕпе паллаштаракан презентаци лапамĕпе хутшăнни питĕ килĕшрĕ. Чăваш Енри ĕçтешĕмпе Елена Зайцевăпа ăсталăх сехечĕсемпе тĕп редактор кунĕсене хаваспах хутшăнтăмăр", – пĕлтернĕ Светлана Юрьевна.

А.ГРОМОВА.

## Ăмăртусенчен – çитĕнўпе



***Адыгея Республикинчи Майкоп хулинче Пĕтĕм тĕнчери "Кавказ турĕ" пĕрремĕш велочупу иртнĕ.***

Молдави, Австри, Беларуç, Украина тата Раççей спортсменĕсем пилĕк кун вăй виçнĕ. Турнир вăхăтĕнче вĕсем Адыгея çулĕсемпе 570 километр чупса тухнă. Юлашки тапхăрта (пиллĕкмĕш кун) велосипедçăсем сăрт çине хăпарассипе 10 километрлă дистанцире тупăшнă. Çак ăмăртура пирĕн ентеш Дмитрий Игнатьев мала тухнă. Чăваш Ен спортсменĕ финиша 18:21,63 минутра вĕçлесе чи лайăх кăтартупа палăрнă. Велочупу пĕтĕмлетĕвĕпе вăл 19-мĕш вырăн йышăннă.

Çак кунсенчех Шупашкарти Олимп резервĕсен 7-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптакан хĕрсем Сочире иртнĕ çĕр-шыв кубокĕнчен медальсемпе таврăннă. РФ спорт мастерĕ Ольга Терентьева хĕрарăмсен турнирĕнче "бронзăна" тивĕçнĕ, Татьяна Кузнецова çамрăк велосипедистка икĕ "ылтăн" çĕнсе илнĕ. Унăн тусĕсем Марина Семеновăпа Яна Казакова пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă.

А.МИХАЙЛОВ.

● ➡ *3 стр. «Спорт» кăларăм*

Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 7, çĕрле 7 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 761 мм, сывлăшри нўрĕк 56 процент.

**Кун тăршшĕ 10 сехет те 56 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать, кăштах çумăр çăвать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 8, çĕрле 7 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 756 мм, сывлăшри нўрĕк 77 процент.

**Кун тăршшĕ 10 сехет те 52 минут.**

ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА

# Сухаламан çĕршĕн те хавхалантаратпăр-и?

## Çĕнтерӳçĕсен премийĕ самаях катăлчĕ

***Министрсен Кабинечĕн ĕнерхи ларăвĕнче ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăш-пĕр ведомство ертӳçисем тĕлĕшпе шелсĕр пулчĕ. Пĕри Правительство йышăнăвне улшăну кĕртме сĕннине ыйтăва тĕплĕ хатĕрлемен тесе ырлама хирĕçлерĕ, тепри лару кун йĕркипе тумалли докладне манса хăварнă та – «ун тĕлĕшпе служба тĕрĕслевĕ ирттерме», çийĕнчен сывлăх сыхлавĕн министрне сумлă чиновникĕн «юн пусăмне тĕрĕслеме» сĕнчĕ.***

Юрĕ, ку сăмах май тенĕ пек пултăр. Анчах калаçтараканни ларура татах пулчĕ. Экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин ял-хула тăрăхĕсен 2013 çулхи экономика ăмăртăвĕн çĕнтерӳçисене хавхалантармалли укçана валеçессипе паллаштарчĕ. Халăх йышне кура пайланă ушкăнсенче Етĕрне районĕнчи Иваньково, Шупашкар районĕнчи Вăрман Çĕктер, Комсомольски районĕнчи Чĕчкен ял тăрăхĕсем мала тухнă. Вĕсене общество инфратытăмне аталантарма 660-шар пин тенкĕ параççĕ. Чăн та, «парасшăнччĕ» тени тĕрĕсрех пулать.

Михаил Игнатьев тӳрех кăмăлсăрланчĕ: иртнĕ çул кăтартăвĕсемшĕн укçана мĕншĕн халĕ тин паратпăр? Унăн шухăшĕпе – çу уйăхĕнчех уйăрмалла пулнă, ял тăрăхĕсем çав укçана ĕçе хывса ĕлкĕретчĕç. Ку çеç те мар, республика Пуçлăхне ăмăрту çĕнтерӳçисем иккĕлентереççĕ. Вăл Иваньково, Вăрман Çĕктер тăрăхĕсенче усă курман çĕрсем пуррипе кăсăкланчĕ. Вице-премьер – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов çирĕплетнĕ тăрăх – унашкаллисем пур.

– Çав ялсем пирки республика хапхи теме пулать, – палăртрĕ Михаил Васильевич. – Усă курман çĕрсем пур тăк – укçа мĕншĕн паратпăр? Эппин, ăмăрту çĕнтерӳçисене палăртмалли методикăна улăштармалла.

Министр Етĕрнесен çурт-йĕр тăвас, бюджет тупăшĕ енĕпе кăтартусем аваннине тĕпе хунипе тӳрре тухма тăчĕ-ха, анчах республика Пуçлăхне пур пĕр ӳкĕте кĕртеймерĕ. Патшалăх Канашĕн комитечĕн ертӳçи Николай Малов хăйĕн ентешĕсен хутне кĕресшĕн пулчĕ: «Иваньковăра усă курман çĕрсем çук. Лаша завочĕ аван ĕçлет, çул хĕрринчи сервис объекчĕсем...» Çук, çакă та пулăшмарĕ.

– Чĕчкенсене тулли кăмăлпа хавхалантарма хатĕр. Кусем вара – хула çумĕнчи территорисем, Мускавпа Мускав облаçĕ пек. Вăрман Çĕктерти çĕрсене пăхăр – лаптăксене уйрăм çынсем туянса пĕтернĕ, пĕр 15 хут сута-сута янă. Иваньковăра Шупашкар элити пурăнать... Сирĕн, депутат пулнă май çакна пĕлмелле, – пăнчă лартрĕ Михаил Игнатьев. Çавна май асăннă ял тăрăхĕсене ăмăртура çĕнтернĕшĕн памалли премие 1/3 чухлĕ чакарма сĕнчĕ. Владимир Аврелькин «чакарнине Комсомольскисене парăпăр-и?» тесе ыйтрĕ те – татăклă хурав пулчĕ: «Бюджетра хăварăпăр».

Пурлăх министрĕ Анатолий Кузьмин туянмалли, пулăшу ĕçĕсем пурнăçламалли саккассене халăхпа обязательнăй майпа сӳтсе явмалли йĕркене çирĕплетесси тавлаштармарĕ. Хăш тĕслĕхсенче хаксем пысăк – вĕсене обществăпа пĕрле тишкермелле. «Хупă» саккассем – патшалăх вăрттăнлăхĕ шутланаканнисем, РФ Президенчĕ сĕннипе пурнăçлаканнисем. Сăмах май, çитес çул валли 100 млн тенкĕрен хаклăрах саккассем пĕр теçетке патнелле пулмалла-мĕн.

ЧР Патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕн ертӳçи Олег Бирюков хăй ертсе пыракан ведомство ĕçĕ-хĕлĕ çинчен отчет турĕ. Докладра, паллах, цифра нумай – хăш-пĕрне асăнни вырăнлă. Юлашки виçĕ çулта инспекци административлă правăна пăсни пирки 300 ытла ĕç пуçарнă, 38 млн тенкĕлĕх тӳлевсене çĕнĕрен шутласа палăртнă, çурт-йĕр хуçисене ытлашши тӳлетернĕ 6 млн тенке каялла тавăрса панă.

> ✓ КУСЕМ – ХУЛА ÇУМĔНЧИ ТЕРРИТОРИСЕМ, МУСКАВПА МУСКАВ ОБЛАÇĔ ПЕК. ВĂРМАН ÇĔКТЕРТИ ÇĔРСЕНЕ ПĂХĂР – ЛАПТĂКСЕНЕ УЙРĂМ ÇЫНСЕМ ТУЯНСА ПĔТЕРНĔ, ПĔР 15 ХУТ СУТА-СУТА ЯНĂ. ИВАНЬКОВĂРА ШУПАШКАР ЭЛИТИ ПУРĂНАТЬ...

Республика нушисем валли таварсем налук хурас тĕллевпе çурт-йĕрпе мĕнле усă курнине палăртмалли йĕркепе паллаштарчĕ. Вăл каланă тăрăх – пĕлтĕр ку енĕпе 2,9 млрд тенкĕ тупăш илнĕ. Кăçал хăш-пĕр енĕпе кăтарту чакма пултарать-мĕн. Чăн та, «тĕп налукçă» Ольга Никина çине тăрса ĕçлесен налук ӳсĕмне тивĕçтерме май пуррине те палăртрĕ. Çав вăхăтрах Предпринимательсен прависем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăй Владимир Иванов вак бизнесшăн йăтайми тиев пуласран сыхланса хăйне евĕр виçе çирĕплетме сĕнчĕ – лаптăк унран пĕчĕкрех тĕк налук хумалла мар. Сĕнĕве шута илес терĕç.

Михаил Игнатьев «тăрă мар» управляющи компанисен тӳпипе кăсăкланчĕ те – унашкаллисем, Олег Борисович палăртнă тăрăх, 30% таранах-мĕн, УКсене ĕçлемешкĕн лицензи памалли йĕрке çине куçсан вĕсенчен хăтăлма пулать, çакă ĕç-хĕлшĕн сиенлĕ пулмĕ. «Çынсем вара мĕнпе тăрса юлĕç?» – интересленчĕ ЧР Пуçлăхĕ. «Парăмсемпе...» – çивĕчлĕх пулма пултарасса пытармарĕ тĕп инспектор.

Лару Министрсен Кабинечĕн маларах кăларнă хăш-пĕр йышăнăвне улшăнусем кĕртнипе вĕçленчĕ.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

# Вăрман историйĕн урокĕ

***Республикăра "Вăрманçăсем алăка уçаççĕ" акци пырать. Сăнав вăрман хуçалăхĕн Çĕрпӳ уйрăмĕн вăрманçи А.Егоров авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнче Ямаш шкулĕн вĕренекенĕсене Раççей вăрман историйĕпе паллаштарчĕ.***

Вăрмана шута илме, унпа усă курассине йĕркелеме тытăнакканни – I Петр патша. Ăна çыр-шывăн пĕрремĕш вăрманçи теççĕ. Вăл патшалăхăн чăтлăх-вĕтлĕх хуçалăхне никĕслеме 200 яхăн указпа хушу кăларнă тата кĕпĕрнесене çыру янă. Унччен йывăç касассине патшалăх акчĕсемпе йĕркелеменпе пĕрех, вăрман пыл пухмалли, сунарта çӳремелли вырăн çеç тенĕ.

Собор йышăнĕвĕн /1649 ç./ пункчĕсенче ăна вут-кăвартан сыхламаллине палăртнă. Вĕлле хурчĕ пыл хунă йывăç хăвăлĕсем уйрăм çын харпăрлăхĕ шутланнине пĕлтернĕ. Шерпет кӳрекен вараксене сăтăрланине йывăр преступленипе танлаштарнă. Патша указсем кăларса тинĕс-юхан шыв флочĕ валли йывăç кăларма, унăн лаптăкĕпе пахалăхне хак пама хушнă. Вĕсене пурнăçласа Хусанпа Чĕмпĕр кĕпĕрнисенчи чăваш вăрманĕнче юманпа хыр нумай каснă. 1703 çулхи указпа килĕшӳллĕн лашмансем Атăл, Сăр, Мăн тата Кĕçĕн Çавал, Вăта, Кĕтне юхан шывĕсен тăрăхĕнчи йывăççене тӳнтерсе карап валли юхтарнă.

Тĕл пулура вăрман хуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕллевсем çинче те чарăнса тăчĕç. Ачасем хунав çитĕнтерекен питомниксен ĕç-хĕлĕпе, вăрманçă профессийĕпе кăсăкланчĕç. Шкул картишĕнче 20 хырпа туя лартрĕç.

■ **Кира НАЗАРОВА**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# Спортсменăн çăкăрĕ тутлă-и?

Шупашкар 2014

## Çитĕнӳ картлашки чи вăйлисем валли

Çак ыйтăвăн хуравне пĕлес тесен марафонçăсен тупăшăвне сăнамалла ахăртнех. Финиша çитессишĕн кам виçĕ сехете яхăн чупма пултарĕ-ши? Паллах, спортсмен. Чăваш Ен пики Татьяна Архипова 2012 çулта Лондонра иртнĕ Олимп вăййисенче марафон турнирĕнче тĕнчери чи вăйлă спортсменсемпе тупăшни халĕ те асăмран тухмасть. Пĕтĕм çĕр-шыва тĕлĕнтерсе бронза медаль çĕнсе илчĕ ун чухне пирĕн мухтавлă ентешĕмĕр. «42 километрлă дистанцие парăнтарма çăмăл мар паллах. Малтанлăха хам та шиклененттĕм. Организма хăнăхтармалла, ăмăртусене хутшăнни те – пысăк шкул. Малтан кĕске дистанцисенче вăй висĕнĕ, чăрмавсем урлă чупас енĕпе ăсталăха туптанă. Каярах марафон чупма пуçларăм», – тенĕччĕ вăл тĕл пулура.

«Спортсмен пуласси – уй урлă каçасси мар», – хушса хунă пулăттăм эпĕ. Чăннипе, хальхи самана çынни хир тăрăх утмашкăн та кахалланать: «Аякра тăватă кустăрмалли курăнмасть-и унта», – ĕмĕтленет хыçалалла çаврăнса. Атлетсен вара ăмăрту вăхăтĕнче никама та шанмалли çук – вăй-хал пултăр кăна. Унăн тĕллевĕ – çĕнтересси. Ăна пурнăçламашкăн малтанах чылай тар тăкма тивет. Олимп вăййисенче палăрас текеннисен уйрăмах маттур пулмалла. Çитĕнӳ картлашки чи вăйлисене çеç хапăллать.

Спортран аякра тăракансен шухăшĕпе профессионал спортсмен пурнăçĕ çăмăл пек туйăнать. «Ĕçе васкамалла мар, пушă вăхăт нумай, шăрчăк пек кăна сиккелесе çӳре», – тенĕччĕ пĕлĕшĕм. Анчах вĕсен кун йĕрки те ыттисенни пек мар-çке. Эпир ирсерен зарядка тума ӳркенетпĕр пулсан, атлетсен кашни кун вун-вун çухрăма парăнтармалла, унсăр пуçне кулленхи тренировкăсем миçе сехете тăсăлаççĕ-ши? Апат-çимĕç енĕпе ахаль çын пек чĕре сури тунипех ӳт-пĕве çырлахтараймастăн, вар-хырăма пылак çимĕçпе те улталаймастăн – ятарлă диетăна çирĕп пăхăнмалла, çав вăхăтрах пахалăхли те тĕрлĕ витаминпа пуянни тутанмалла. Ăмăртусем спортсменсене инçе çула тухма хистеççĕ. «Хамăн пурнăçăма спортпа çыхăнтарман пулсан тĕнчери вун-вун çĕр-шыва кайса курайміттăм», – теççĕ пирĕн сумлă ентешсем. Турнир иртекен пĕр-пĕр хулапа паллашма та вăхăт пулманнине пĕлтерет хăшĕ-пĕри. Хăнăхнă пулин те çул çӳресси ывăнтарать ахăртнех.

Спортсменсем пуринчен ытларах травма илеççĕ. Кулленхи тренировкăра, турнир вăхăтĕнче ал-урана амантма пултараççĕ вĕсем. Пысăк суран темиçе çул аптăрatать, ăмăртусене хутшăнма чарать. Хăшĕ-пĕрне вара инвалида кăларать. Раççей бобслейçине Ирина Скворцовăнах илер. Миçе çул ĕнтĕ чирпе кĕрешет спортсменка. Сипленнĕ хыççăн спорта таврăнасси те пĕчĕк ача пĕрремĕш утăмĕсене тунă пекех йывăр. Анне ятне илтнĕ хĕрсене те çăмăлах мар, ӳт-пĕве тепĕр хут хăнăхтарса малтанхи çĕнтерӳсем патне ăнтăлмалла.

Юлашки çулсенче тĕнчере Паралимп тата Сурдлимп юхăмĕсем вăй илеççĕ. Патшалăх та сусăрсене спорта явăçтарассишĕн нумай ĕç тăвать. Сусăррисемшĕн вара спорт çăкăр пекех пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем сывă çын тума пултарайман çитĕнӳпе тĕлĕнтерме пултараççĕ. Спортпа туслăскерсем темле йывăр пулсан та малаллах талпăнма тăрăшаççĕ. Ку енĕпе пирĕн ентешсенчен Паралимп вăййисен виçĕ хут чемпионкинчен Елена Иванова-Сидоровăран, Иван Пакинпа Андрей Андреев, Александр Сорокинпа Константин Репин атлетсенчен Анастасия Седова бадминтонçăран тĕслĕх илмелле.

Чылайăшĕ спортсменсем ытлă-çитлĕ пурăннине калаççĕ. Олимп вăййисенче палăрнисене тĕрлĕ наградăсăр пуçне хваттерпе тивĕçтерни, çăмăл машина парнелени вăрттăнлăх мар. Ку – Олимп медалĕн хакĕ. Чăваш Енре хамăр çĕршыври паллă футболистсем пек миллионлă шалусем илмеççĕ пулин те хавхалантармалли мелсем пурах. Калăпăр, пысăк пĕр-пĕр ăмăртуран медальпе таврăннă спортсменпа унăн тренерне премипе чыслаççĕ, уйăхсерен стипенди параççĕ. Олимп, Сурдлимп тата Паралимп вăййисене хатĕрленекенсене те укçа-тенкĕпе пулăшаççĕ. Анчах та хăш-пĕрне çакă тивĕçтермест, лайăх пурнăç шыраса урăх региона тухса кайнă тĕслĕх сахал мар. Паллах, вĕсене унта çитĕнĕвне пăхмасăрах укçа-тенкĕ енĕпе кӳрентерменни, ăсталăха туптамашкăн майсем пысăк пулни илĕртет. Паллă пĕр тренер калани те асра: «Пирĕн воспитанник спорта парăннă çын, унăн çитĕнĕвĕсем те пĕчĕк мар: Атăлçи округĕн чемпионачĕсенче, çĕр-шыври çамрăксен ăмăртăвĕсенче вăл чи пултарулисен йышĕнче, анчах каччăна малалла хăпармашкăн хатĕрленӳ вăхăчĕ çителĕксĕр пулни чăрмантарать. Тренировкăна килес вырăнне унăн ĕçе утма тивет: хваттер тара илмешкĕн, тумланмашкăн, спорт хатĕрĕсем туянмашкăн чылай укçа кирлĕçке», – тенĕччĕ вăл. Чăн та, ку енĕпе пур яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа çăмăл мар, уйрăмах чухăн спортсмена.

Спорт çулĕ çине тăрас тесен ачаран спортпа туслă пулмалла. Çапах та ашшĕ-амăшĕ хĕрĕпе ывăлне секцие илсе çӳреме пуçласан ачи чемпион ятне илттĕр тесе ĕмĕтленет, анчах пур çынран та спортсмен пулаймасть. Статистика кăтартăвĕ тăрăх – спорт шкулне çӳрекен 10 ачаран 1-2-шĕ кăна пысăк çитĕнӳсем тăвайрать. Çавăнпа та ĕмĕт-шухăшпа пурăнни кăна çителĕксĕр, кулленхи ĕçпуç çинчен манса вăй хумалла.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**



**Олег АНДРЕЕВ, Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 8-мĕш спорт шкулĕн директорĕн çумĕ:** «Халĕ те, ĕлĕк те спортсменсене çӳле çĕкленме çăмăл мар. Хăйĕн вăй-халне шеллемен çын кăна пысăк çитĕнӳсем тума пултарать. Спортсменăн пушă вăхăт сахалрах. Ĕçпе спорта шайлаштарасси те аплах мар. Калăпăр, занятие кайиччен кашни кун ирхи зарядка тумаллаччĕ, чупмаллаччĕ, каçхине каллех тренировкăна. Паллах, çакă кун йĕркине çирĕплетет, дисциплинăна пăхăнма хăнăхтарать. Спортсмен пурнăçĕ космонавт профессине çывăх».



**Валерий ГАВРИЛОВ, спорт ветеранĕ, паллă ориентировщик:** «Ăмăртусене тухса çӳреме, вĕсене ирттерме укçа-тенкĕ çитменни чăрмантарать, ятарлă секцисем çуккипе çамрăксене явăçтарма йывăрланса пырать, çавăнпа спортпа туслисен йышĕ кашни çул улшăнать, ăсталăха туптаса ӳснĕ яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçран чылайăшĕ пире пăрахса каять. Хальхи спортсменсене хавхалантарни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Ĕлĕк заводра вăй хунă чух ăмăртусене хутшăнакансене ĕçрен хăтаратчĕç, общество ĕçĕнче хастаррине палăртса премисем паратчĕç. Спортăн кашни тĕсĕ уйрăм пулнине шута илмелле. Тĕслĕхрен, ориентированире чупас енĕпе кăна хастар пулни çителĕксĕр, географи предметне ăша хывни питĕ пĕлтерĕшлĕ, карттăсемпе ĕçлеме пĕлмелле».



**Валентина ЕГОРОВА, марафонçă, Олимп вăййисен чемпионки:** «Спорт – манăн пурнăç. Хама спортран айккинче курмастăп. Паянхи кун та чупатăп, бассейна çӳретĕп, йĕлтĕрпе çӳреме кăмăллатăп. Тӳсĕмлĕ те ĕçчен çынсем кăна спортсмен пулаяççĕ. Мĕншĕн тесен спортра чăтăмлă та патвар пулмалла, йывăрлăха çĕнтерсе малалла талпăнмалла, унсăрăн çитĕнӳ тума май çук».



**Петр СИДОРОВ, РФ физкультурăпа спорт отличникĕ:** «Спортра пысăк çитĕнӳ тăвас тесен тар нумай тăкмалла. Калăпăр, Раççей спорт мастерĕн нормативне тултарас тĕллевпе спортсменсен вунă çула яхăн тăрăшмалла. Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕн физкультура уйрăмне ертсе пынă Евгений Носов йĕлтĕрçĕ мастер ятне тивĕçес тесе 10 çул ытла вăй хучĕ. Эпир çамрăк чухне, эпĕ 67-ри асатте ĕнтĕ, республикăра спорт шкулĕсем çукпа пĕрехчĕ, 40 çул каялла кăна уçăлма пуçларĕç вĕсем. Паян хăш-пĕр районта икшер те пур, шкулсенче ăсталăха туптакан çамрăк сахал мар. Спорт комплексĕсем çинчен эпир ĕмĕтленмен те. Халĕ курăр-ха: мĕнлерех илемлĕ те чаплă вĕсем, унтан тухас та килмест. Ку енĕпе паянхи спортсменсене ăмсанмалла кăна».



**Светлана ЕРПЫЛЕВА, триатлон тата сивĕ шывра ишессипе республика чемпионки, Сĕнтĕрвăрринчи полици уйрăмĕн ĕçченĕ:** «Сывă пурнăç йĕркине пăхăнни, спортпа туслă пулни ӳт-пĕве çамрăклатать. Чир-чĕр те çыпăçмасть, хăвна ялан çирĕп кăмăллă туятăн. Спорт – хуйхă-суйхăран, йывăр шухăшран çăлакан эмел. Çав вăхăтрах кашни çыннăн сывлăхĕ хăйне уйрăм пулнине манмалла мар, шалти туйăма итлемелле. Карьера вĕçленсен спортсменăн МЧС тытăмĕнче ĕçлеме май пур. Унта вăйлă та паттăр, чăтăмлă та хăюллисем кирлĕ. Калăпăр, эпĕ сивĕрен хăраманскер пăрлă шывра ишме пултаратăп».

ХĔЛ УМĔН

# Сивĕре те ăшă пулĕ

***«ТГК-5» АУОн /«КЭС» АХО тытăмне кĕрет/ Мари Элти тата Чăваш Енри филиалĕ Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти, Йошкар-Олари социаллă сферăпа çурт-йĕр фончĕн мĕн пур потребительне ăшă панă. Çакăн çинчен компани ертӳçисем юсав кампанине пурнăçланине, çурт-йĕре хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланнине халалланă пресс-конференцире пĕлтерчĕç.***

### Юсавпа çĕнелӳ – шанчăклăх никĕсĕ

ТЭЦсемпе магистральлĕ ăшă сечĕсем юсав ĕçĕсене туллин пурнăçланă, çакна комисси актсемпе çирĕплетнĕ. Çитес эрнерех филиалăн кĕркунне-хĕлле ĕçлес хатĕрлĕхне пĕтĕмĕшле хаклĕç, тивĕçлĕ паспорт илмелле.

Вĕçленсе пыракан çулталăкри çитĕнӳсен шутĕнче филиал директорĕ Юрий Цешковский Çĕнĕ Шупашкарти 3-мĕш ТЭЦра 80 мВт хăватлă çĕнĕ турбоагрегата хута янине асăнчĕ – юлашки çулсенче республикăри энергетика объекчĕсенче кунашкалли пулман. Çавăн пекех ТГК-5 Шупашкарти Николаев урамĕнчи магистрале çĕнетессине вĕçленĕ, унта 2011 çултанпа кивĕ 2500 метр ытла трубопровода улăштарнă.

– Пăрăхсем икĕ теçетке çул ытла ĕçленĕ, яланах нӳрлĕ вырăнта пулнă – кивелсе çитнĕччĕ. Хула чиккинчи магистрале улăштарассине вĕçлерĕмĕр, çитес çул промзонăна куçас тĕллевлĕ. Çавна май юсавпа çыхăннă чăрмавсем çитес 20 çулта сире текех хăратмалла мар, – терĕ филиалăн тĕп инженерĕ Андриан Тимофеев шăпах Николаев урамĕнче вырнаçнă телерадиокомпани корреспонденчĕн ыйтăвне хуравланă май.

КЭС-Холдинг вĕри шыв пама чарăнмалли тапхăра кĕскетме хатĕрленĕ «ГВС 2.0» программа та ăнăçлă пурнăçланать. Генераци компанийĕ хăй ĕçлекен хуласенче нормăпа пăхнă 14 кун вырăнне вĕри шыва 7-9 кунлăха çеç чарать. Ку – тĕллевлĕн ĕçленин, компани хушма укçа уйăрнин кăтартăвĕ, мĕншĕн тесен сăмах анлă техникăпа йĕркелӳ мерисем пирки пырать.

Çывăх çулсенчех вĕри шыва вуçех те чармасăр ĕçлеме пуçласшăн. Чăн та, ТГК-5 çакна Çĕнĕ Шупашкарта кăна туллин тĕрĕслесе тăрайĕ, çак хулара унăн 3-мĕш ТЭЦĕ – ăшă энергийĕн пĕртен пĕр çăл куçĕ. Шупашкарпа Йошкар-Олара ресурссемпе тивĕçтерекенсем татах пур, çавна май, сăмахран, Чăваш Ен тĕп хулинче ĕçсем йывăртарах пыраççĕ. Апла пулин те кăçал кунта та «вĕрине» 10 кун çеç паман. Çапах Юрий Цешковский шантарчĕ: «Çак хуласенче те вĕсен ертӳçисене, республикăсен правительствисене ӳкĕте кĕртме тăрăшăпăр, мĕншĕн тесен сăмах потребительсен хăтлăхĕ пирки пырать».

Юрий Анатольевич ытларах та каларĕ: «ГВС 2.0» программа каярахпа ăшăпа тивĕçтерессин хăйне евĕрлĕ тытăмне çаврăнмалла – электричество пекех ăшă энергийĕ те сетьсенче яланах пулĕ, кашни потребитель ăна кирек хăçан та, çав шутра çулла та, кирлĕ чухлĕ илме пултарĕ. Ун чухне ăшă хăçан парассине е чарассине мэри мар, потребитель хăй палăртĕ.

### Япăх ташлакана мĕн чăрмантарать?

Çакăнпа пресс-конференцин хавхалануллă пайĕ вĕçленчĕ пулас – потребительсен энергокомпани умĕнчи парăмĕ пирки сăмах пуçартăмăр.

Авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ Мари Элти тата Чăваш Енри предприятисемпе организацисен ТГК-5 умĕнчи парăмĕ 1,1 млрд тенкĕрен иртнĕ. Шел те, çак виçен тĕп пайĕ – пирĕн республикăри потребительсен тӳпи. Ахальтен мар авăн вĕçĕнче Саранск хулинче РФ энергетика министрĕн çумĕ Андрей Черезов ертсе пынипе субъектсен электроэнергетикине хĕле хатĕрленин ыйтăвĕсемпе ирттернĕ канашлура Чăваш Ене усă курнă энергоресурссемшĕн дебитор парăмне ӳстерсе янă регионсен шутĕнче асăннă.

ТГК-5 умĕнчи парăмăн чи пысăк ӳсĕмĕ – «Коммуналлă технологисем» ОООн. Авăн уйăхĕшĕн тӳлемеллине шута илмесен татман парăм юпа уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне 435 млн тенке яхăн. Çулталăк пуçланнăранпа КТ энергетиксене пĕтĕмпе те 8,7 млн тенкĕ тӳленĕ – 9 уйăхшăн шутласа панин 1% ытларах. ТГК-5 КТна техника хатĕрлĕхĕн паспортне тĕпе хурса кăна ăшă пама пултарать. «Паянхи кун тĕлне предприятин унашкал пĕр документ та çук. «Коммуналлă технологисем» ресурспа тивĕçтерекен организацие тăратнă нарядсене компани хĕле хатĕр маррине палăртса тавăрса паратпăр. Сăлтавĕ – çурт-йĕре хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрленнин хаклавĕ РФ Энергоминĕн хушăвĕпе çирĕплетнĕ критерисене тивĕçтерменни», – теççĕ генераци компанийĕнче.

Чăн та, коммунальщиксем республикăри хаçатсенчен пĕринче пичетленĕ отчет çĕкленӳллĕ: вĕсен пĕтĕмпех питĕ лайăх-мĕн. «Лайăх пек кăтартасшăн, чăннипе вара питĕ япăх, – хакларĕ Юрий Цешковский. – Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, компанире – кĕскетнĕ ĕç кунĕ. Пире кăна мар, газовиксене те, Чапаев ячĕллĕ завода та унран илнĕ ăшăшăн тӳлемеççĕ, банксемпе те çивĕчлĕх пур...»

### Хурлăхлă кĕвĕ – кам ячĕпе?

«Эсир КТ директорĕсемпе паллашса ĕлкĕретĕр-и?» – «Коммуналлă технологисен» ертӳçисем ытла та çине-çинех улшăннине кура çак йĕркесен авторĕ панă ыйту тĕлĕшпе хуравĕ те çапларахах пулчĕ: «Эпĕ ăна ЧР Правительствин пуçлăхĕ Иван Моторин парăм ыйтăвне татса парас енĕпе ирттернĕ канашлу йышăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калаçмашкăн иртнĕ эрнере чĕннĕччĕ – килмерĕç. Ĕнер чĕнтĕм – каллех кăмăл тумарĕç. Халĕ кирек хăш вăхăтра килĕр тетĕп – килмеççĕ. Вĕсем ялан Мускавра, «Коммуналлă технологисен» виллине мĕнле пытарассине сӳтсе яваççĕ-тĕр».

КТ вара хăйĕн потребительсен çуррине çухатнă ĕнтĕ – управляющи компанисем ТГК-5 филиалĕпе тӳрĕ килĕшӳсем тунă. Чăн та, тĕп пайĕ çулталăк пуçламăшĕнче куçнă, каярахпа процесс чарăннă.

– Муниципалитет, республика, федераци предприятийĕсен позицине ăнланмастăп – пирĕн тарифсем те пĕчĕкрех вĕт! Нумайăшĕн финанс лару-тăравĕ йывăр, эпир тӳлевсене икĕ уйăх кĕтме хатĕр – çакă вĕсене пулăшĕччĕ, пирĕн дебитор парăмне чакарĕччĕ. Тепĕр тесен кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пур пĕр пирĕн пата – Ăшăпа тивĕçтерекен пĕрлехи организацие – куçĕç. Маларах куçсан лайăхрахчĕ, ку вара КТ самантрах вилессине пĕлтерĕччĕ. Анчах вĕсем раштав вĕçлениччен тата кăштах асапланасшăн пулас-ха, – шелсĕр каларĕ филиал директорĕ.

Çĕнĕ Шупашкарти ырă мар ят çĕнсе илнĕ «Новэк» УК пухнă 80 млн тенкĕлĕх парăма çухатассипе вара энергетиксем çырлахнă пулас. Ун вырăнне химиксен хулинче çак УК пăхса тăракан çуртсем пĕтĕмпе те теçетке патнелле çеç юлнă, ыттисем ТГК-5 «çуначĕ» айне куçнă. Апла тăк малашне пуçа ыраттараканни сахалрах пулĕ. Çапах кунта та пĕр кашăк тикĕтсĕр мар. «Мана Çĕнĕ Шупашкар прокуратури кăна пăшăрхантарать, – пĕлтерчĕ Юрий Анатольевич. – Вăл эпир темиçе судра выляса илнине, «Новэкăн» потребительсене квитанцисем памалли право çуккине пĕлсе тăнă çĕртех мана эпир хамăр пурлăхпа хуçаланас тенĕшĕн йĕрлет. Пĕр штрафа тӳлерĕм ĕнтĕ, татах суда каймалла. Анчах Конституци пур, вăл харпăрлăха хӳтĕлет. Ăшă энергийĕ, вĕри шыв – компани харпăрлăхĕ. Çавăнпа хамăрăн тĕрĕслĕхшĕн тăрăпăр, прокуратурăна Тĕп Саккун, Конституци сучĕ, Конституци гаранчĕ пуррине ĕнентерĕпĕр».

«Коммуналлă технологисем» тĕлĕшпе те энергетиксем мĕскĕн путек вырăнĕнче пуласшăн мар. ТГК-5 муниципалитет тата генераци компанийĕн активĕсен никĕсĕ çинче Шупашкарта пĕрлехи ăшă сечĕсен предприятине йĕркелеме сĕнет. Энергетиксен шухăшĕпе – ăшша производитель патĕнчен юлашки потребитель патне илсе çитермелли çак проект кирлех. 5-мĕш ТГКра хăйĕн потребителĕсене ăшăпа тивĕçтерессин «сăнчăрĕнчен» КТ текен сыпăка кăларса пăрахасшăн пулас.

– КТра – лайăх коллектив, анчах финанс енĕпе япăх ертсе пынине кура вăл панкрутлăх умĕнхи лару-тăрăва лекнĕ, – иккĕленмест Юрий Цешковский. – Çынсем юлĕç. Сетьсем те – вĕсем муниципалитетăн. КТ пулманни хулана нимĕнле инкек те кӳмĕ. 2-мĕш ТЭЦра ăшă хăвачĕн саппасĕ çителĕклĕ. Кăштах аталансан эпир пĕтĕм хулана ăшăтма пултаратпăр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**





Реклама




КУÇА-КУÇĂН

# «Вĕренекенсем тĕрĕс çул çине тăнăшăн савăнатăп»

## Тĕнче рекордсменкин пĕрремĕш тренерĕ патĕнче хăнара

***1985 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче хăвăрт утас енĕпе тĕнче рекордне çĕнетсе Патăрьел хĕрĕ Александра Деверинская Чăваш Ен ят-сумне çӳле çĕкленĕ. Пысăк çак çитĕнӳ унăн пĕрремĕш тренерне Мевлет Зейнетдинова та савăнтарнă, малалла ĕçлемешкĕн вăй-хал хушнă. Пуллă спортсменкăн вĕрентекенĕпе çывăхрах паллашас тĕллевпе Патăрьел тăрăхне çитсе килтĕм. 40 çула яхăн Аслă Арапуç шкулĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă Мевлет Хабибуллович хальхи вăхăтра районти спорт шкулĕнче тренер-преподавательте вăй хурать: асăннă пĕлӳ çуртĕнче тата Пăлапуç Пашьел шкулĕнче ирĕклĕ мелпе кĕрешме вĕренекенсен секцийĕсене ертсе пырать. Шăпах çавăнта тĕл пултăмăр та Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕпе.***

**– Мевлет Хабибуллович, сирĕн вĕренекенĕр Александра Деверинская ача чухне еплерех çын пулнă-ха?**

– Санюк тесе чĕнеттĕм ăна /чăвашла илемлĕ калаçнинчен тĕлĕнсе лартăм эпĕ. – **Авт.**/ 1974 çулта Аслă Арапуç шкулĕнче ĕçлеме пуçларăм. Ун чухне вăл 8-мĕш класра вĕренетчĕ. Физкультура урокĕсенче пуринчен те вăйлăрах чупакан хĕр çăмăл атлетика секцине çӳреме тытăнчĕ. Унта ачасене спортсменсене хатĕрлекен программăпа вĕрентеттĕм. Чăтăмлă та хастарччĕ вăл, пуçланă ĕçе вĕçлемесĕр чарăнмастчĕ. Ашшĕ-амăшĕ ĕç нумайăшне пула тренировкăсене çӳреме чарнă пулин те пĕр занятирен юлмастчĕ. Крахмал завочĕн каяшĕпе варанă пĕве çумĕнче тренировка ирттерни те шиклентерместчĕ ăна. Пĕрремĕш çулсенчех районти, унтан республикăри ăмăртусенче палăрма пуçларĕ. 9-мĕш класра вĕреннĕ чухнех «Правда» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн иртнĕ Пĕтĕм Союзри турнирта вăл 800 тата 1500 метрлă дистанцисенче мала тухма пултарчĕ.

**– Çамрăкскер çавăн чухнех хăйĕн пурнăçне спортпа çыхăнтарма шухăшланă пулĕ?**

– Пултарулăскере шкулта пĕлӳ илнĕ вăхăтрах Шупашкар тренерĕсем тĕп хулана илсе каясшăнччĕ, анчах çамрăк-ха тесе эпĕ те, ашшĕ-амăшĕ те хирĕç пултăмăр. Вĕренсе тухсан вăл педагогика институтне физкультура уйрăмне вĕренме кĕчĕ, унта Санюка республикăри паллă спортсмен Николай Пуклаков хăйĕн хӳттине илчĕ. Каярах маттур студенткăна Геннадий Семенов асăрханă, хăвăрт утас енĕпе ăсталăха туптама сĕннĕ.

**– Александра Тимофеевнăн çитĕнĕвĕсем сире çунатлантарчĕçех пулĕ?**

– Хăйĕн ушкăнĕнче 1-2 çултах çĕр-шывра чи пултарулли пулчĕ. СССР чемпионатĕнче тĕнче рекордне çĕнетни вара капашсăр пысăк савăнăç парнелерĕ. Рекорд хыççăн рекорд, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ. Тĕнче кубокĕн призерĕ, Универсиада чемпионки – епле-ха хĕпĕртемĕн! Олимп вăййисене те хутшăнмаллаччĕ унăн, анчах тĕнчери лару-тăрăва пула май килмерĕ. Çапах парăнмастчĕ вăл. Çемье çавăрса /унăн мăшăрĕ – Николай Григорьев врач/ ача çуратсан та малаллах талпăнатчĕ. Тренировкăна та пепкипе тухнă, ывăлне вара тренер пăхнă. Тепĕр ача çуратсан çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командинче чи вăйлисенчен пĕри пулнине пăхмасăрах çемье пĕлтерĕшлĕреххине ăнланчĕ пулас. Тата та пысăк çитĕнӳсем тума пултарнă вăл.

**– Эсир хăвăр мĕншĕн вĕрентекен профессине суйласа илтĕр?**

– Эпĕ Патăрьел районĕнчи Именкассинче çуралса ӳснĕ, унтах пурăнатăп. Пĕчĕклех вăй питти ача пулса çитĕннĕ, ыттисем пекех кĕрешме, йĕлтĕрпе чупма юрататтăм, йĕтре тĕртсе районти турнирсенче малти вырăнсене йышăнаттăм. Ирĕклĕ мелпе кĕрешес енĕпе спорт мастерĕн кандидачĕ эпĕ. Чкаловскинчи /халĕ – Шăнкăртам/ вăтам шкулта физкультура урокĕсене пире республикăри паллă спортсмен, чылай ăмăрту çĕнтерӳçи Расых Камалетдинов вĕрентетчĕ. Унран тĕслĕх илтĕм пулĕ – Тутарстанри Альметьевскри физкультура техникумне вĕренме кĕтĕм. Хам та спортпа çамрăклах туслă пулнăран шкул ачисене те явăçтарма шухăшларăм: Аслă Арапуç шкулĕнче ĕçлеме пуçласан икĕ секци йĕркелерĕм – çăмăл атлетика тата ирĕклĕ мелпе кĕрешесси.



**– Сирĕн çунатăр айĕнчен пултаруллă спортсмен пĕрре мар вĕçсе тухнă...**

– Санюк пеккисем, чăн та, нумайăн пулчĕç, тĕрлĕ ялтанччĕ вĕсем. Малтанхи çулсенчех Арапуçри пĕр тăван Ринальдăпа Эльза Смирновăсем республикăри ăмăртусенче чупассипе палăрчĕç. Каярах Пӳртлĕ ялĕнчи Николай Выросов çĕр-шыв чемпионатĕнче 100 метрлă дистанцире пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Сергей Емельяновпа Валерий Полетаев атлетсем çĕр-шыв чемпионачĕсенче çĕнтерсе Раççей спорт мастерĕн нормативĕсене тултарчĕç. Анатолий Шуряков, Елизавета Тарасова, Геннадий Фролов, Андрей Козлов, Иван Киргизов тата ыттисем – чупас енĕпе тĕрлĕ ăмăрту призерĕсем. Хальхи вăхăтра эпĕ ытларах ирĕклĕ мелпе кĕрешме вĕренекен хĕр-яшпа ĕçлетĕп. Чăннипе, вĕсен çитĕнĕвĕсемшĕн те хĕпĕртетĕп. Акă Аслă Арапуçри Ксения тата Алексей Смирновсем федерацин Атăлçи округĕн чемпионатĕнче мала тухрĕç, халĕ Олимп резервĕсен училищинче вĕренеççĕ. Анна Сидорова пысăк çитĕнӳсемпе савăнтарчĕ. Надежда Фомина, Анастасия Выросова, Алевтина Лисицина тата ыттисем республика турнирĕсенче палăрчĕç. Манăн ĕçе малалла тăсакансем пурришĕн те мухтанатăп. Владимир Семенов ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕн ятне тивĕçрĕ, Василий Никитин Çĕнĕ Шупашкарти спорт шкулĕнче ĕçлет, унăн шăллĕ Валерий – Аслă Арапуç шкулĕн вĕрентекенĕ. Анатолий Власов та пурнăçне спортпа çыхăнтарчĕ.

**– Паянхи яш-кĕрĕмпе ĕçлеме çăмăл-и?**

– Çĕнĕ технологи ĕмĕрĕнче ачасене спорта явăçтарма çăмăлах мар. Интернет, телефон, тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕр ытларах илĕртет вĕсене. Тренерсемпе учительсем çине тăмасан пĕр-пĕр ăмăртăва хутшăнас текен çамрăк та тупас çук. Унчченрех спорт секцине 30-40 ача çӳретчĕ, халĕ 20-ĕшне пухма та йывăр. Паянхи самана спортпа, уйрăмах кĕрешӳпе туслă пулни, питĕ пĕлтерĕшлĕ. Яшсемпе хĕрсене вăрă-хурахран хӳтĕленме пĕлмеллине, çирĕп сывлăхлă пулмаллине ăнлантаратăп. Ĕлĕк эпир шкула çуран çӳренĕ, уроксем те урамра иртетчĕç, çавăнпа нихăçан та чир-чĕр мĕнне пĕлмен. Автобуспа çӳрени сывлăхшăн япăх – чылайăшĕ çар ретне юрăхсăр. Спорт еннелле туртăнакансем, спортсменăн çăмăл мар çулĕ çине тăма шикленменнисем те пур, анчах питĕ сахал. Паллах, вĕсене çухатмалла мар пирĕн, малашлăхра çул кăтартса пымалла.

■ Андрей МИХАЙЛОВ калаçнă



**Александра Деверинская /1960, Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ялĕ/ – çăмăл атлетика енĕпе спортăн тĕнче креслă мастерĕ, ЧАССР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Хăвăрт утас енĕпе Раççей тата Чăваш Ен чемпионки тата рекордсменки, СССР чемпионки тата призерĕ /1981-1986/, Пĕтĕм тĕнче Универсиадин чемпионки /1985/, тĕнче кубокĕн призерĕ /1981/, Европа тата тĕнче рекордсменки /1981-1982/. Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă, Шупашкарти экономика-технологи техникумĕн преподавателĕнче, Олимп резервĕсен 8-мĕш спорт шкулĕн директорĕнче /2002-2007/ ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра – коопераци институчĕн доценчĕ.**

МАССĂЛЛĂ ТУРНИР

# Швецирен çĕнĕ вăй-хăватпа таврăнтăмăр

## «О-Ринген» – чăваш ориентировщикĕсен ĕмĕчĕ



***Шведсем çĕр-шывра спорт ориентировки аталаннипе чăннипех мухтанма пултараççĕ. Карттăпа тата компаспа усă курса чупма çамрăксене шкултах вĕрентни, парксемпе вăрманлă тăрăхсенче ятарлă полигонсем вырнаçтарни, ятарлă карттăсене кашни киоскпа лавккарах сутни, çулталăкне вун-вун ăмăртупа чемпионат ирттерни спорт ориентировкине вăй илме пулăшнă. Тĕнчери «О-Ринген» чи массăллă ăмăрту та Швецире иртет. Çулсерен йĕркелекен турнира кăçал Чăваш Ен спортсменĕсем те çитсе курнă. Кун çинчен пире спорт ветеранĕ, республикăри паллă ориентировщик Валерий ГАВРИЛОВ каласа пачĕ.***

«О-Ринген» – турнира пуçарнă организаци ячĕ. Унччен вăл «Швецири пилĕк кунлăх» ятлă пулнă, мĕншĕн тесен тупăшусем пилĕк куна пыраççĕ. Кăçалхи ăмăрту Кристианстад хули çывăхĕнче иртрĕ, унта 23 пин /!/ спортсмен тупăшрĕ. Турнира кашни çын хутшăнма пултарать: вун-вун ăмăртура мала тухнисем те, ачасемпе çамрăксем те, ветерансем те, спортпа тин кăна кăсăкланма тытăннисем те. Паллах, кашни уйрăм ушкăнра вăй виçет.

«О-Ринген» хула çывăхĕнчи пĕр-пĕр яла аса илтерет: унта суту-илӳ центрĕ, апатланмăш, мунча, спорт лапамĕ тата ытти кермен çĕкленсе ларать. Эпир палаткăсемпе автофургонсенче пурăнтăмăр. Стартсем ирхи 8 сехетре пуçланатчĕç те кăнтăрла иртсен вĕçленетчĕç. Пушă вăхăтра – тĕл пулусемпе калаçусем. Хăшĕ-пĕри хулана е ку тăрăхри паллă вырăнсене курса çӳрерĕ. Ăмăртусем чуллă вырăнта икĕ кун иртрĕç, виççĕмĕш кун – Балти тинĕсĕ хĕрринче. Финиш хыççăн хаваспах тăварлă шывра чăмпăлтатрăмăр.

Пирĕн çул çӳрев Санкт-Петербургран пуçланчĕ. Унта эпир паллă вырăнсемпе паллашрăмăр. Нева хĕррипе çуран утрăмăр, Смольнăйра уçăлса çӳрерĕмĕр, анчах Хĕллехи кермен патне çитме вăхăт пулмарĕ. Унтан пире инçе çул Финляндири Турку хулине илсе çитерчĕ. Стокгольма çити паромпа – 9 палубăллă карапла – кайрăмăр. Хăнасене питĕ илемлĕ хула кĕтсе илчĕ: авалхи керменсемпе чиркӳсене, суту-илӳ центрĕсемпе чаплă çуртсене, портра ларакан яхтăсемпе карапсене куç илми сăнарăмăр. Эпир Копенгагенра та пулса куртăмăр. Туристсем ăна Скандинавири Париж теççĕ, теприсем нихăçан çывăрман хула тесе хаклаççĕ.

Чăваш Ен чысне ăмăртура 10 çын хӳтĕлерĕ: агрегат заводĕнче вăй хуракан Николай Павлов, Елизавета Михайлова, Вячеслав Смирнов, Чăваш патшалăх университечĕн преподавателĕ Артур Шугаев тата Людмила Филиппова, трактор тăвакан завод ĕçченĕсем Вениаминпа Лилия Ландышевсем, Вера Николаева, Зинаида Никонорова тата эпĕ. Пирĕнпе пĕрле Йошкар-Ола спортсменĕсем Виктор Петровпа Вячеслав Хельдерт пычĕç. Чăваш Ен командинче чи лайăх кăтартупа республикăри чи сумлă ориентировщик Николай Павлов палăрчĕ, 60 çултан аслăрах арçынсен ушкăнĕнче вăл 15-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕ.

Хамăн ушкăнра /М 65/ вара эпĕ Йошкар-Олари Виктор Петровпа тупăшрăм. Пĕрремĕш кунĕнче вăл манран маларах тухрĕ, тепĕр кун эпĕ ăна çĕнтертĕм. Виççĕмĕш кунĕнче те лайăх чупрăм, манăн юлташăм вара суранланнине пула финиша çитеймерĕ. Ытти кун та унпа ăмăртрăм. Çăмăл пулмарĕ, пурпĕр ăна 3:2 шутпа парăнтартăм. Турнирта пьедестал çине хăпараймарăм пулин те хамăн кăтартăва лайăхлатрăм.

Швеције тахçанах кайса килме ĕмĕтленеттĕмĕр, тинех шухăшлани пурнăçланчĕ. Унтан эпир çĕнĕ вăй-хăватпа таврăнтăмăр.

■ Андрей ПЕТРОВ итленĕ




Кăларăма Андрей МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.

ÇĂМĂЛ АТЛЕТИКА

# Ентеш парни – чи паха

## Республикăра сумлă спортсменсен наградисене çĕнсе илессишĕн ăмăртусем иртнĕ

***Чăваш Енре Владимир Андреева, Александра Деверинскаяна тата Вячеслав Краснова пĕлмен çын çук та пулĕ. Вĕсен парнисене тивĕçессишĕн йĕркелекен турнирсем йăлана кĕчĕç.***

Олимп вăййисен бронза призерĕн Владимир Андреевăн тăван ялĕнче – Лаш Таяпара – хăвăрт утакансем тупăшнă. Кăçал унта Канаш, Елчĕк районĕсен çамрăк спортсменĕсем тата Мордва каччисемпе хĕрĕсем хутшăннă. Вĕсем 1-3 километрлă дистанцисенче тăвата ушкăнра мала тухассишĕн вăй виçнĕ. Турнирта Мордва спортсменĕсем пуринчен пултаруллăрах пулнă. Пирĕн ентешсенчен вара пысăк парнесене Елчĕкри Нина Романовăпа Владимир Кузьмин, Канаш тăрăхĕнчи Дарья Григорьевăпа Александр Васильев тивĕçнĕ.

Кроссменсем Европа тата тĕнче рекордсменкин Александра Деверинскаян парнисене çĕнсе илессишĕн Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçне пухăннă. 200 ытла спортсмен – шкул ачисем, яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç, ветерансем – ăмăртнă. Тĕрлĕ стартра Аслă Арапуç шкулĕнчи Вероника Иванова, Наталья Никитина, Александр Ермошкин, Шупашкарти коопераци институчĕн студенчĕ Евгений Плотников, Нăрваш Шăхальти Геннадий Федоров, Маргарита Николаева, Полина Леонтьева тата ыттисем малти вырăнсене йышăннă.

СССР спорт мастерĕн, РФ физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн, 1994-2006 çулсенче ЧР спорт министрĕ пулнă Вячеслав Красновăн парнисене тивĕçессишĕн Канаш районĕнчи Çĕнĕ Шелттем ялĕнче хăвăрт утас енĕпе иртнĕ турнирта спортсменсем республикăри 5 район, Шупашкар тата Мордови чысне хӳтĕленĕ. Тĕрлĕ ушкăнра Олимп резервĕсен ятарлă 8-мĕш спорт шкулĕнче тата Олимп резервĕсен училищинче ăсталăха туптакан яшсемпе хĕрсем уйрăмах палăрнă.



■ Егор АНДРЕЕВ

ХАМĂР ТĂРĂХРИ ӲСЕН-ТĂРАН

## Шурă-шурă хурăн

● Йывăр чире пула вырăн çинчен тăраймасăр выртакансен ӳчĕ шăтать. Компресс тумашкăн хурăн кăчкин спиртпа хатĕрленĕ шĕвекĕпе усă кураççĕ /20 грамм хурăн кăчки, çур стакан 90% спирт илмелле/. Компресс валли 1 виçе настойка, 30 виçе шыв кирлĕ.

● Экзема чухне хурăн кăчкин шĕвекĕ лайăх. 10 грамм типĕтнĕ чĕр тавара вĕри 1 стакан шыва ямалла, çур сехет вĕретмелле, сăрăхтармалла.

● Экзема канăçсăрлантарсан, часчасах çăпан тухса аптратсан, ӳт кăмпа чирĕсемпе сиенленсен кунне 1 хут хурăн сĕткенĕ 1 стакан ĕçмелле. Экземăран хурăн сĕткенĕпе çăвăнма та юрать.

● Хурăн çулçи шĕвекĕпе çӳçе çирĕплетмешкĕн усă кураççĕ. Пĕр ывăç çулçа вĕренĕ 1 литр шыва 2 сехетлĕхе ямалла, çӳçе чӳхекен шыва хушмалла.

● Пародонтоз, стоматит пулсан, шăл туни шыççан çăвара хурăн кăчкин шĕвекĕпе чӳхесен аван. 10 грамм типĕтнĕ чĕр тавара 1 стакан вĕри шыва ямалла. 15 минут вĕретмелле, сăрăхтармалла.

## Массаж тата унăн усăллă витĕмĕ

● Çамкана массаж туни организма лăпкăлăх кӳрет, шухăшсене пĕр тĕвве пухма пулăшать.

● Тăнлава массаж туни куç курассине лайăхлатать.

● Куç харшине сăтăркалани ӳте канлĕх кӳрет, çакă куççемшĕн уйрăмах усăллă.

● Пуçа массаж тусан миме патне кислород ытларах пырса тăма пуçлать, вăйхал ӳсет. Çӳç вăйлă тăкăнсан та массаж тума сĕнеççĕ. Пуçа кашни кунах сăтăрмалла.

● Çупа сĕрсен çӳç çирĕпленет, типĕ çӳç таткаланма, тăкăнма пăрахать.

АНСАТ МЕЛПЕ

## Çăмарта хуппи

Çăмарта хуппи организма кальципе тивĕçтерет. Хими тытăмĕпе вăл шăл, шăмă тытăмне çывăх. Унра пăхăр, фосфор, тимĕр, марганец тата ытти те пур.

Чăх çăмартин хуппи юн тăвакан органсенче япаласен ылмашăвне лайăхлатать, ал-урана хуçасран сыхлать, ăнсăртран хуççан шăмăсене хăвăрт сыпăнма пулăшать. Вĕтетнĕ çăмарта хуппин кашни кунхи виçи – 2-3 грамм, усă курма пуçличчен ăна çăнăх пек пуличчен вĕтетмелле. 14-15 кун сипленмелле.

Ачасене ку «çăнăха» услам çупа, укроп вăррипе, ешĕл çимĕçпе хутăштарса çитермелле. Çапла майпа сиплесе вĕсене, тĕслĕхрен, чĕрне кăшлас япăх хăнăхуран пистерме пулать. Мĕншĕн тесен ку организма кальци çитменнипе çыхăннă, чĕрнесем çинче шурă пăнчăсем пулни те çакăн çинченех калать.

Çăмарта хуппин паха енĕсем çинчен каласа пĕтерме те çук. Кăкăр хĕртсен акă халăх сиплевçисем çур чей кашăкĕ çăмарта хуппи çиме сĕнеççĕ, иçĕм çырли эрехне кăштах хушсан вар виттирен хăтăлма пулать. Ӳте ăнсăртран пĕçертнипе хăмпă тухсан çăмарта хуппин çăнăхне сапмалла.

ХАЛĂХ МЕДИЦИНИ

## Тăм

Авал пирĕн тăхăмсем кăкăр хĕртсен, вархырăмра йӳçеклĕх пухăнсан тăмпа усă курнă. Ăна малтанах шăрăх çанталăкра хĕвел питтинче тытнă. Кваспа йĕпетсе горчичник вырăнне пуç, ура çине çирĕплетсе хунă. Тĕлĕнмелле те, тифпа /!/ чирлисене те пулăшнă вăл. Çынна кĕтмен çĕртенех вĕрилентерсе пăрахсан, вăл çавна пула аташма пуçласан, пуç ыратсан уксуспа хутăштарнă тăма ура тупанĕсем çине хунă.

**Шурă тăм** – температурăна чакарма пулăшать, олифпа хутăштарса марля çине вырнаçтарса пиçнĕ ӳт çине хумалла. Суран хăвăртах ӳт илет.

**Ача шăкĕпе хутăштарнă сарă тăм** – пыл хурчĕ сăхнинчен.

Кантăр çăвĕпе хутăштарнă тăм «пашалăвне» пĕр-пĕр çĕре ăнсăртран пырса çапăннипе ӳт кăвакарсан, ал-урана сиктерсен ыратакан тĕле хумалла.

Тăма ӳсен-тăран çăвĕпе, хурăн йывăççин кĕлĕпе е çăмартапа хутăштарса вăйлă пиçнĕ ӳт çине хураççĕ /марля çине вырнаçтарса тытмалла/.

## Çĕнĕ хыпарсен ярăмĕнчен

● Британи ăсчахĕсем çирĕплетнĕ тăрăх – кашни кунах юрлани çывăрнă чухне харлаттарнинчен хăтăлма пулăшать. Çак тĕллевпе кулленех 20 минутран кая мар юрламалла. 3 уйăхран «юрăçсем» вăйсăртарах харлаттарма пуçлаççĕ, малтанхинчен канлĕрех çывăраççĕ.

● Камăн сигарет туртма пăрахас килет – çавсен баклажан çимелле. Çакнашкал пĕтĕмлетӳ патне пырса тухнă Германи ăсчахĕсем. Унри РР витамин никотинран пистерет иккен.

● Ӳрĕк-сӳрĕк арçынсем валли пирĕн косметологсем çĕнĕлĕх – кофеинлă супăнь – шухăшласа тупнă. Ӳт урлă витĕм кӳрсе вăл сӳрĕклĕхрен хăтăлма, хавхаланма пулăшать. Çакнашкал супăне хатĕрлеме пĕтĕк çăвĕ хушаççĕ.

АЧАНА ТУТЛИПЕ САВĂНТАРАР-И?

## Йăва

**4-шар çĕр улмипе кишĕр, çур стакан сĕт, 2-шер апат кашăкĕ манна кĕрпи тата услам çу, 1 çăмарта, 1 çăмарта сарри, 200 грамм хăйма, тутине кура тăварпа пăрăç, ешĕл çимĕç кирлĕ.**

Çĕр улмине шуратмалла, пĕçермелле, нимĕрлемелле. Кастрюле вĕри сĕт ярса çулăм çинче вĕреме кĕриччен тытмалла, манна кĕрпи хушмалла. Çĕр улми нимĕрĕпе хутăштармалла, пăрăç, тăвар сапмалла. 6 йăва тумалла, çу сĕрнĕ противене вырнаçтармалла, çăмарта сарри сĕрмелле. Духовкăра пĕçермелле.

Йăвана хăймапа ешĕл çимĕç хутăшĕпе çиме аван.

## «Шăккалат юмахĕ»

**150 грамм шăккалат, стаканăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлĕ сахăр песукĕ, 1 стакан хăймаллă сĕт, 100 грамм услам çу, пĕчĕкрех стакан çăнăх, 3 çăмарта сарри, 4 шурри, «юмаха» сĕрме çу кирлĕ.**

Шăккалата теркăпа хырмалла, хăймаллă сĕтпе /вĕри кирлĕ/ хутăштармалла. Кăштах сивĕнсен çăмарта саррине сахăр песукĕпе кăпăшлантармалла, веçех пĕрле пăтратмалла.

Çăнăха çемĕçнĕ услам çупа, маларах хатĕрленĕ шăккалат «пăттипе» хутăштармалла. Пĕрмаях пăтратса хутăша вĕрилентермелле /вĕретмелле мар/. Сивĕнсен кăпăшлантарнă çăмарта шурри хушмалла, духовкăра пĕçермелле.

**Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

# Художниксен ыр кăмăллăх куравĕ

***Шупашкарта Арина Перцева, Ольга Альфонс, Атнер Маков художниксен ĕçĕсен ыр кăмăллăх куравĕ уçăлнă. Çак ятпа йĕркеленĕ уява ЧР Художниксен союзĕн председателĕ Ревель Федоров, тухтăрсем, художниксем, волонтерсем, хула çыннисем йышлă хутшăннă.***

Искусство произведенийĕсемпе тĕп хулари М.Горький проспектĕнчи «Заварка» чей клубĕнче паллашма пулать. Акцие А.Перцевăн хĕрне Настьăна чикĕ леш енче сиплеме укçа-тенкĕ пухас тĕллевпе йĕркеленĕ. Хĕр ача маларах Германи тухтăрĕсем патĕнче сипленнĕ.

Арина Перцева – Алексей Альфонс художникĕн хĕрĕ. И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн худграф факультетне пĕтернĕ. Пĕлтĕр вăл живопиç ĕçĕсемпе Чăваш художникĕсен союзĕн юбилей куравне хутшăннăччĕ. Хура тинĕс çыранĕсене тата Энĕш шывĕн илемне сăнланă картинăсене тăратнă вăл унта. А.Перцевăн натюрморчĕсем те аван пулса тухнă.

Ольга Альфонс В.Суриков ячĕллĕ ӳнер институтĕнче вĕренет. «Заварка» клубри курава вăл «Прекрасный край», «Маковое поле», «Портрет в модерне» тата ытти ĕçне тăратнă. Атнер Маков та аслă çак шкулта пĕлӳ пухать. Курава пыракансем унăн «Сказочная Индия» картинине хак пама пултараççĕ.

Чăваш художникĕсен хăш-пĕр ĕçне туянакансем те тупăннă. Вĕсене сутса тунă укçана пĕчĕк хĕр ача сиплеме ярĕç. Клубра пĕлтернĕ тăрăх – курав юпа уйăхĕнче те ĕçлĕ.

■ **Тимĕр АКТАШ**



● *«Эревет» ансамбль.*

# «Эревет» савăк кăмăл парнелет

***Чăваш Тимешри культура çурчĕ çумĕнчи «Эревет» халăх фольклор ансамблĕ çак кунсенче Волгоград герой-хулара иртнĕ Пĕтĕм Раççейри наци культурисен IX «Атăлран Дон таран» фестивалĕнчен таврăнчĕ.***

Тăван тăрăха çитсенех коллектив ертӳçи Александр Федулов «Хыпар» хаçатăн Йĕпреçри корпунктне кĕрсе тухрĕ. «Пире çăкăр-тăварпа питĕ тарават кĕтсе илчĕç, – терĕ Александр Дмитриевич. – Волгоград облаçĕнчи халăх пултарулăхĕн центрĕ юрă искусствин уявне ирттермелли вырăн пулса тăчĕ. Атăл хĕрринчи хулана Раççей Федерацийĕн вунă регионĕнчен 60 коллектив тата Волгоград облаçĕнчи 27 муниципалитетран ăстасем килнĕ. Чăваш Ен чысне «Эревет» фольклор ансамблĕ хӳтĕлерĕ. Фестивале хупнă чухне Волгоград облаçĕн культура министрĕ Виктор Гепфнер çакна палăртрĕ: «Халăх таланчĕсен уявĕнче чăвашсен ушкăнĕ ăсталăхĕпе те, сцена çинче хăйсене тытнипе те ыттисенчен уйрăларах тăнине кăтартса пычĕ. Çавна май вăл герой-хула çыннисемпе фестиваль хăнисен кăмăл-туйăмĕнче сутă йĕр хăварчĕ».

«Эревет» фестивалĕн йĕркелӳ комитечĕн I степень дипломне тивĕçрĕ. Унта «Эпир сире наци культурин ырă енĕсене упраса хăварнăшăн тата вĕсене аталантарса пырса халăхра сарнăшăн чунран тав тăватпăр» тесе çырнă сăмахсем кашнин кăмăлне çĕклентерчĕç.

Волгоградăн сăваплă çĕрĕнче ентешсем паллă вырăнсене çитсе курнă, Мамай сăрчĕ çине хăпарса «Тăван çĕр-шыв-анне чĕнет» монумент умне чĕрĕ чечек хунă, хула çыннисен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă.



● *А.Федулов илемлĕх ертӳçи фестиваль дипломĕпе.*

«Эревет» халăх фольклор ансамблне Александр Федулов 30 çул ытла ертсе пырать. Виçĕм çул раштав уйăхĕн вĕçĕнче Чăваш наци радиовĕ ирттернĕ «Авалхи чăваш юрри-çаврисем» конкурсра Чăваш Тимешсем пĕрремĕш вырăна тухнă.

Çапла, «Эревет» куракансене савăк кăмăл парнелет. Унăн тĕллевĕсем çутă та пархатарлă. Халĕ вăл Ял хуçалăх ĕçченĕн кунĕ тĕлне çĕнĕ программа хатĕрлет. «Концертпа районти чылай яла çитесшĕн, – халăх таланчĕсен шухăшне палăртса пĕлтерет илемлĕх ертӳçи. – Шупашкартан килекен «çăлтăрсем» халăх умне нухрат сĕнмесĕр тухмаççĕ пулсан, эпир кăмăла яриех уçатпăр. Шăпчăк та юрланăшăн укçа ыйтмасть».

■ **Геннадий ВАСИЛЬЕВ**

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Турă пани тапса тухатех...

***Тăван халăх кун-çулĕ пурне те шухăшлаттарать. Тарăнрах пĕлес текенсем тĕпчев ĕçнех кӳлĕнеççĕ. Евгений Турхан журналист тата çыравçă – шăпах çавсен шутĕнчен. Чăваш аваллăхне шыраса вăл таçта та çитнĕ. Курни-илтнине хайлавĕсене кĕртсе хăварать. Нумаях пулмасть Евгений Андреевичăн «Каганлăх тĕпренчĕкĕ» истори-приключени романĕ кун çути курчĕ. Унпа вулакансене ЧР Наци библиотекинче паллаштарчĕç.***

Евгений Турханăн пĕрремĕш хайлавĕсем «Авангард» хаçатра иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче кун çути курнă. 1989 çулта «Пăла таврашĕнче» кĕнеки пичетленнĕ. «Каганлăх тĕпренчĕкĕ» роман 2001 çулта Хусанта вырăсла тухнă. Халĕ вара чăваш вулаканĕ патне тăван чĕлхепе çитрĕ. Авторшăн истори теми çĕнĕлĕх мар. Вăл хăйĕн чылай хайлавĕнче чăваш халăх кун-çулĕпе, чăваш çĕрĕн шăпипе çыхăннă ыйтусене хускатать. Историри паллă пулăмсене хăй епле хакланине çеç кăтартмасть, вулакана та сӳтсе явма хутшăнтарать.




«Каганлăх тĕпренчĕкĕ» романри ĕç-хĕл канăçсăр XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче пулса иртет. Хусан кĕпĕрниччи хресченсен пăлхавĕсене, çав вăхăтри кăткăс пурнăçа сăнарсен кун-çулĕ, ĕçĕ-хĕлĕ урлă ĕненмелле кăтартса панă. Хайлав никĕсĕнче автора аслашшĕ, ашшĕ Атăлçи Пăлхар, Турхан йăхĕ çинчен каласа кăтартнă халапсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Ача чухне ăса хывса хăварнăскере çулсем иртнĕ май ыттисене те пĕлтерес килни Е.Турхана кĕнеке çырма хистенĕ те ахăртнех. Автор кунпа «пăнчă лартасшăн марха»: малалли пайĕ пулассине те систерчĕ.

Кĕнеке уявне Евгений Андреевичăн пултарулăхне хисеплекенсем, пĕрле вĕреннĕ, ĕçленĕ тус-юлташĕ, пĕлĕшĕсем йышлă пухăнчĕç. Вĕсем унăн ĕç-хĕлне пысăк хак пачĕç. Урăхла пулаяс та çук, мĕншĕн тесен Турхан йăхĕ литература ĕçĕнче тахçанах палăрнă. Çырас ăсталăх ăруран ăрăва куçса пырать. Евгений Андреевичăн аппăшĕ Вероника Турхан та пултаруллă çыравçă. Уявра унăн «Живым надо жить» кĕнекипе паллаштарчĕç. ЧР Ăслăлăхсен тата искусствăсен наци академийĕн хисеплĕ академикĕ Юхма Мишши ăна чăвашлăхшăн тăрăшнăшăн, пултарулăхри курăмлă ĕçĕ-хĕлĕшĕн хĕрарăмсен Эмине ячĕллĕ наци премийĕпе чысларĕ. Çакăн пек пысăк чыса Евгений Андреевич та тивĕçрĕ. «Юнра пурри тапса тухатех. Чăн-чăн Турхан йăхĕ», – палăртрĕ Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши ăна А.Талвир ячĕллĕ литература премине пани çинчен пĕлтернĕ май.

Виталий Станьял Е.Турхан кăкăрĕ çине Чăваш халăх академийĕн Н.В.Никольский орденне çакса ячĕ. «Çĕтĕк çăпаталлă чăваш пурнăçне кăтартакан кĕнеке нумай. Турхан чăваш пурнăçне истори чăнлăхĕпе çыхăнтарса çутатрĕ. Ăçта суять? Ăçта тыттарать? Сисместĕн те, асăрхамастăн та. Питĕ ĕненмелле çырса кăтартнă», – терĕ вăл кĕнекене пахаласа.

Е.Турхан Чăваш Республикинчи хаçатсенче чылай ĕçленĕ. Тутарстанри «Сăвар» чăваш хаçатĕнче яваплă секретарьте тăрăшнă, тĕрлĕ ыйтупа статьясем çырнă. Халĕ те унăн материалĕсĕр пĕр кăларăм та кун çути курмасть. «20 çул пĕлетĕп ăна, – аса илчĕ «Сăвар» хаçатăн пĕрремĕш редакторĕ пулнă Николай Сорокин. – Хаçата çăмăллăн уçрăмăр. Çыракан çукран питĕ нушалантăмăр паллах. «Редактор епле пулăн-ха? Чăвашла манса пыратăн-çке», – тенĕччĕ мăшăрăм. Малтанхи вăхăтра иккĕн ĕçлесе пурăнтăмăр. Унтан Турхан килчĕ. Питĕ ĕçчен çын вăл. Хаçат ĕçĕнчен кăшт пушансан Турхан аслă çул çине – çыравçă çулĕ – çине тухрĕ.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

# Ачасем вулавăшпа туслă



Вăрмарти тĕп библиотекăри "Пĕтĕмпех пĕлес килет" клуба çӳрекенсем юпан 9-11 мĕшĕсенче Шупашкарта иртекен пĕтĕм тĕнчери спорт форумне халалланă "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" кĕнеке куравне хутшăнчĕç.

Хĕр-упраçпа яш-кĕрĕме Олимп вăййисен бронза призерĕн кун-çулĕ, çитĕнĕвĕсем çинчен каласа кăтартакан электрон презентаци те килĕшрĕ. Унтан аслă класс вĕренекенĕсем вулавăшра тĕрлĕ хаçат-журналпа паллашрĕç, "Ашшĕ-амăшне те воспитани памалла" тест ыйтăвĕсене хуравларĕç. Тăван тавралăх пайĕн библиотекарĕ Р.Иванова кĕркуннехи паллă кунсем, юбилейсем çинчен каласа кăтартрĕ.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

## Тем те пĕр

**● 1968 çулта Китай ертӳçи Мао Цзэдун Пакистан делегацине йышăннă. Пакистансем çул пуçа манго хунă карçинкка парнеленĕ. Маона çак çимĕç тути килĕшсех кайман, карçинккана вăл Цинхуа хулинчи рабочисем патне ăсатнă. Китай Халăх Республикин председателĕ янă хăйне евĕрлĕ экзотика çимĕçĕ пролетари кăмăлне кайнă. Рабочисем Китайри ытти завода та пĕрер манго ăсатнă.**

**Çакăн хыççăн мангона темрен мала хума пуçланă. Пекинри пир-авăр комбинатĕнче хаклă йышши улма-çырлана çитес ăрусем валли сыхласа упрас тĕллевпе мангона ăвăс сĕрнĕ. Ĕç çыннисем манго çумĕпе иртнĕ май пуç тайнă.**

**Часах пур çĕрте те – кухньăра усă куракан савăт-сапаран пуçласа парти символики таранах – мангона ӳкерме тытăннă. Ялсенчи хресченсем тĕлĕнмелле улма-çырлана курма çĕр-çĕр çухрăм утнă. Халĕ ĕнтĕ вăл вилĕмсĕрлĕх çăл куçĕ – «Маон чĕрĕ шухăшĕ» – пулса тăнă.**

**● Латви тĕп хули варринче хула каналĕнче хăнтăрсем /бобр/ пурăнаççĕ. Рига мэрийĕпе çак чĕр чунсем хушшинче вăраха пынă кĕрешӳ хăнтăрсем çĕнтернипе вĕçленнĕ. Йывăççене хӳтĕлесе тытнă илемлетнĕ металл хӳмесем пулăшайман.**

**Сăтăрçăсем нумаях пулмасть Латви наци оперин çуртне хирĕç йывăça кăшласа тĕп тунă хыççăн ыйту питĕ çивĕч тухса тăнă.**

**Хăнтăрсемпе этемлех хăтланма йышăннă. Чĕр чунсене апат çитереççĕ, вĕсем валли опера çурчĕ çывăхĕнче ятарлă сырăш вырнаçтарнă, иртен-çӳрен те мĕнлерех апатланнине сăнама пултарать. Малашне канал хĕррипе мĕнлерех килĕштермен ӳсен-тăран, тĕслĕхрен, кĕл чечек, лартма пуçлĕç.**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

**ПРИГЛАШАЕМ МОЛОДЫХ МАМ БЕСПЛАТНО ПРОЙТИ ОБУЧЕНИЕ НА ПОДГОТОВИТЕЛЬНЫХ КУРСАХ!**



В рамках эксперимента по обучению молодых женщин в возрасте до 23 лет, имеющих одного и более детей, Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова приглашает молодых мам на бесплатные подготовительные курсы по подготовке к сдаче единого государственного экзамена (ЕГЭ), а также к экзаменам, проводимым университетом в традиционной форме, для поступления в вуз.

**Требования к молодым мамам:**

- возраст не более 23 лет по состоянию на 1 октября текущего года;
- наличие одного и более детей;
- наличие гражданства РФ;
-наличие среднего общего, начального профессионального и среднего профессионального образования;
- отсутствие высшего образования;
- при условии, что они не обучаются по образовательным программам высшего образования.

**Обучение осуществляется на бесплатной основе.**

**Обучающимся по очной форме выплачивается стипендия в размере 2000 рублей ежемесячно.**

**Прием заявлений - до 1 ноября 2014 года.**

По всем вопросам обращаться по адресу: 428015, г. Чебоксары, Московский пр-т, д. 19 (корпус химико-фармацевтического факультета ЧГУ), каб. 115, проезд до остановки "ул. Афанасьева". Тел.: 58-18-40 (доб. 2850), моб.: 48-78-94 или 8-903-345-78-94, эл. адрес: dovuzchuvsu@yandex.ru.

Администрация Асхвинского сельского поселения Канашского района ЧР предоставляет в аренду земельные участки сроком на 5 лет для ведения личного подсобного хозяйства, расположенные по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Канашский район, с/пос. Асхвинское, южная часть кадастрового квартала 21:11:140308, с кадастровыми номерами:
1) 21:11:140308:143 площадью 1500 кв.м;
2) 21:11:140308:118 площадью 1500 кв.м;
3) 21:11:140308:119 площадью 1500 кв.м;
4) 21:11:140308:144 площадью 1500 кв.м.
Заявления принимаются в течение месяца со дня опубликования по адресу: 429306, Чувашская Республика, Канашский район, д. Б.Бикшихи, ул. Ленина, д.11а. Телефон для справок 8(83533) 60-6-17.

**9 октября зал Чувашской государственной филармонии начало 18-30**
**90-летию со дня рождения выдающегося**
**чувашского композитора А.В.Асламаса посвящается**
ОТКРЫТИЕ 91-ГО КОНЦЕРТНОГО СЕЗОНА
Концерт Чувашского государственного академического ансамбля песни и танца.
Справки по тел.: 62-14-83, 62-54-48.

## ПРОДАЮ

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу, щебень, керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**654.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Д-ка. Т.: 36-26-23, 89033797768.

**655.Кольца колодезные** – диам. 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Доставка. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.

## СУТАТĂП

**648.Çĕнĕ плуг ПГН-3П-3.** Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел. 8-960-308-15-36.

## РАБОТА

**678.Требуется водитель** в вечернюю смену. Т. 89063871463.

**чăваш халăх хаçачĕ ХЫПАР**

**Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ**

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служби Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

**"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353**

**Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ**

**Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ**

**РЕДКОЛЛЕГИ:**

**М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/**
**Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/**
**С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/**
**Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/**
**Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/**

**Дежурнăй редактор Ю.С.МИХАЙЛОВ**

**Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".**

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

hypar2008@rambler.ru

**Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.**

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

**Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.**

**РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.**

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Номере 08.10.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7384. Заказ 3853.